26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 АВГУСТ 14 ШАМАТКУН 162(6399) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА-СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 12-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 12-мĕшĕнче БРЯНСК енче пирĕн войскăсем çаплах малалла тапăнса пынă, 10 километртан пуçласа 12 километра çити малалла куçса, халăх пурăнакан 100 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра ДМИТРОВСК-ОРЛОВСКИЙ хулине тата халăх пурăнакан çак пысăк пунктсене—ТЕРЕБИЛОВО (Карачев хулинчен 10 километр çурçĕртерехре), НОВАЯ ДЕРЕВНЯ, СУМАРОКОВО (Карачевран 7 километр хĕвелтухăçнерехре), ВЕЛЬЯМИНОВО, ГЛИНКИ, МОЛОДОВОЕ, РОБЬЕ, ТИТОВО, ЛОБКИ, БЕЛОЧЬ, ВАЛДЫШ ятлă пунктсене тата ОДРИНСКАЯ чугунçул станцине илнĕ.

ХАРЬКОВ енче пирĕн войскăсем, тăшман хирĕç тăнине тата унăн контратакисене сирсе ярса, малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 20 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра ЧУГУЕВ хулине, КОТЕЛЬВА район центрне тата халăх пурăнакан пысăк пунктсене—КОЛОНТАЕВ, ЛЮБОВКА, МАЛАЯ РОГОЗЯНКА, ЦИРКУНЫ (Харьковран 8 километр çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре), ЗАРОЖНОЕ, КАМЕННАЯ ЯРУГА ятлă пунктсене илнĕ.

Ытти фронтсенче пирĕн войскăсем çапăçса разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе миномётсенчен персе тăнă.

Августăн 11-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пур фронтсенче те нимĕçсен 56 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе, тăшманăн 48 самолетне ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Брянск енче пирĕн войскăсем çаплах малалла тапăнса пынă.

Карачевран хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, 10 километртан пуçласа 12 километра çити малалла куçнă, халăх пурăнакан 70 пункта йышăнса илнĕ. Халăх пурăнакан çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче нимĕçсен 1 800 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Тăшманăн 15 туппине, 87 пулеметне тата ытти хĕçпăшалне те пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Кромы хулинчен хĕвеланăçнерехре совет войскисем, малалла куçса халăх пурăнакан 40 пункта ытла йышăнса илнĕ. Кромыран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Ушаков гварди полковникĕн тата Орлов полковникăн чаçĕсенчи боецсем Дмитровск-Орловский хулан кăнтăр хĕррине вăрканса кĕрсе кайнă. Урамсенче хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Нимĕçсем ку хулана вăйлă çирĕплетнĕ пункт туса хунă. Паян ирхине ирех пирĕн боецсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, Дмитровск-Орловский хулине пĕтĕмĕшпех йышăнса илнĕ. Хулашăн пынă çапăçусенче совет чаçĕсем тăшманăн 2.000 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе тăкнă. Туллимар данныйсем тăрăх, нимĕçсенчен 12 танк, 16 тупă, 23 миномет, 200 пулемета çити, 1.500 винтовка ытла, боеприпассен складĕсем, 8 радиостанци тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Харьков енче совет войскисем çаплах ăнăçлăн тапăнса пынă.

Харьковран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем, малалала куçса пырса, тăшманăн хаяр контратакисене сирсе янă, тăшмана йывăр çухатусем кӳнĕ. Нимĕç командованийĕ çапăçăва инженерла подразделенисене тата Харьковпа Полтаври артиллери, танк тата техника шкулĕсенчи юнкерĕсене кĕрте-кĕрте ярать. Çавăн пекех çапăçусене Германирен халь тин пырса çитнĕ маршевăй батальонсене кĕртсе ярать. Пирĕн войскăсем, малалла тапăнса пырса, халăх пурăнакан чылай пунктсене йышăнса илнĕ, вăл шутра Котельва район центрне илнĕ. Пĕр гвардейски соединени икĕ кун хушшинчи çапăçусенче 36 танк пĕтерсе тăкнă тата нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 3.000 çынна çити вĕлернĕ. 450 гитлеровеца тыткăна илнĕ. Боеприпассем тата продовольстви тиенĕ 100 автомашинăна тытса илнĕ. Пирĕн пĕр часть нимĕçсенчен 17 юсавлă танк, автомашинăсем нумай тата ытти çар пурлăхĕсем те тытса илнĕ.

Харьковран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Вăл шутра Харьковран 8 километрта ларакан Циркуны ятлă халăх пурăнакан пысăк пункта илнĕ. Пĕр соединени боецĕсем хаяр çапăçусем хыççăн Чугуев хулине йышăнса илнĕ. Тăшмана хула патĕнчен хăваласа янă. Халĕ нимĕçсем пирĕн чаçсем пыра-пыра çапнипе каялла чакаççĕ. Пĕр участокра пĕр йĕркесĕр каялла чакакан нимĕç пехотин пĕр полкне аркатса тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ, вĕсем хушшинче 4 йывăр танк пур. Темиçе çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре Степанович полковникăн авиачаçĕнчи летчик-истребительсем 3 кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 14 самолетне персе ӳкернĕ. Кĕçĕн лейтенант Гончаревский юлташ кун каçиччен икĕ «Мессершмитт» тата пĕр «Фокке-Вульф — 189» пĕтерсе тăкнă. Летчик Лобачев юлташ сывлăшри çапăçу хыççăн каялла хăйĕн аэродромне таврăннă чухне нимĕç самолетне тĕл пулнă. Боеприпассем пулман пирки Лобачев юлташ тăшман самолетне хăйĕн самолечĕпе пырса çапма шутланă. Тăшман патне çывхарса çитсен, вăл хăй истребителĕн винчĕпе нимĕç самолечĕн хӳрине касса татнă. Парашютпа çĕре сикнĕ тăшман летчикĕсене тыткăна илнĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн подразделенисем тăшманăн 400 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Артиллери пенипе нимĕçсен 37 дзотне ишсе антарнă е сиенленĕ, артиллерипе миномётсен нумай батарейисене пусарса лартнă.

* * *

Пирĕн авиаци Хура тинĕсре тăшманăн 2 транспортне путарнă, вĕсен пĕтĕмĕшле водоизмещенийĕ 9.000 тонна.

Баренц тинĕсĕнче пирĕн торпедоносец самолетсем тăшман транспортне тата хуралта çӳрекен карапне путарнă. Пирĕн летчиксем, нимĕç суднисен караванне хӳтĕлесе пыракан авиаципе çапăçăва кĕрсе кайса, тăшманăн 5 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Витебск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен автоколонни пыракан çул çинче засада тунă. Партизансем тăшман автомашинисене хăйсем патне çывăхах çитме панă та вĕсем

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

Пирĕн самолетсем Полтава тата Красноград чугунçул узелĕсене тапăнни

Августăн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци Полтава чугунçул узелне 2-мĕш хут пырса тапăнса бомбăсем пăрахнă. Хула патне вĕçсе пынă чухне пирĕн летчиксем çакна палăртнă: тăшманăн пĕр çар склачĕ ĕнерхи каçранпа çаплах çунма чарăнман. Бомбăсем пăрахнине пула çĕнĕрен 6 çĕрте вăйлă пушарсем тухнă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

Çав каçах пирĕн авиаци Красноград чугунçул узелне тапăннă. Бомбăсем тӳрремĕнех пырса тивнипе тăшманăн темиçе çар эшелонĕ çĕмĕрĕлнĕ.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен аэродромĕсене таврăннă.

ТАСС пĕлтерни

Англири Рейтер агентстви, американецсен «Колумбия» радиостанцийĕ пĕлтернĕ тăрăх тесе, çапла пĕлтерет: Квебек хулинче (Канада) Рузвельтпа Черчилль канашлăвĕнче Совет правительстви пуçлăхĕ те пулмалла пулнă.

Тепĕр енчен, акăлчансен «Дейли телеграф энд Морнинг пост», «Дейли экспресс» тата хăшпĕр ытти хаçачĕсем те çакăн пек хыпар пичетлесе кăларнă: «Квебек хулинче Англипе Америка хушшинче пулмалли калаçусенче советсен çар атташи пулать, вăл унта наблюдатель вырăнĕнче пулать», тенĕ.

ТАСС аллинчи данныйсем тăрăх, çак хыпарсем вĕсем лайăх пĕлмен пирки çапăнса тухнă. Совет правительствине çав канашлăва чĕнни пулман, мĕншĕн тесен, конференци характерне кура, Квебекри канашлăва совет правительствин мĕнле те пулин представительне яма шутламан, халĕ те шутламасçĕ.

Колхоз хирĕнчи çĕнтерӳ—фронтри çĕнтерӳпе пĕрех!

Тырра тăккаланине халех пĕтермелле

ЭЛĔК. Кăçалхи çанталăк тырпулсене уйран хăвăрт пухса кĕртме хушать. Ыраша халех тирпейлĕн вырса пĕтермелле, вăл ларнă çĕртех тăкăнма тытăнать. Çавăнпа та халĕ ĕç пахалăхĕ чи малта пулмалла. Тырра тăккалассинчен асăрханас пулать. Анчах çакна чылай колхозсенче халĕ те çителĕклĕ хакламаççĕ-ха.

Пиçенерти Чапаев ячĕпе тăракан колхозра, акă, тырра питĕ тăккаласа выраççĕ. Тĕрĕслесе пăхни çакна кăтартрĕ: тырра тирпейсĕр вырнипе кашни гектарта вăтам шутпа 59 килограмм тырă тăккаланса юлать. Пĕри гектарта 39 кило тăккаланса юлнă. Çапла пулсан та, ӳксе юлнă пучахсене пуçтарасси çинчен кунта шутламан та-ха.

Янкурасри «Звезда» колхозра (председателĕ Сейт юлташ) çурлапа вырса пухнă çĕртех квадратла метрта 20—25-шер пучах тăкса хăварнă. Анчах пучах çаплипех выртать, ăна пуçтармаççĕ. Çав вăхăтра ах 8—9 çулхи ялти ачасем кулленех вăрмана мăйăра çӳреççĕ.

Элĕкри «Большевик» колхоз тырра япăх вырать, ыраш тăкăнма пуçланă ĕнтĕ, анчах халĕ мĕнпурĕ те 30 процентне çеç вырнă. Кунта та тăкаланчăк нумай. Кашни квадратлă метртах 30—35 пучах ӳксе юлнă.

Ĕçĕн пахалăхĕшĕн тимлĕн тăрăшнă çĕрте, акă, ĕç пачах урăхла. «Труд» колхозра ялти мĕнпур ачасене пучах пухас ĕçе явăçтарнă. Шкулта вĕренекен ачасенчен бригада тунă, вăл бригадăна 12 çулхи пионер Вова Алексеев ертсе пырать. Икĕ гектар çурă урпа вырнă çĕрте бригада 46,3 килограмм пучах пухса панă. Колхозшăн та усăллă, ачасемшĕн те савăнăçлă. Вĕсем çĕршыва усăллă ĕçпе пулăшаççĕ. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «1943 çулхи тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление пурнăçа кĕртес ĕçре колхоза пулăшаççĕ.

Х. ЛИСИН.

Машинăсем чысра мар

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (**Хамăр корр.**). Уйри тырпулсене вăхăтра, пĕр тăккаламасăр пуçтарса кĕртес тесен, ĕç майĕсемпе пурнипе те туллин усă курас пулать. Жнейкăсемпе лобогрейкăсене, кĕреплеллĕ çавасене тата комбайнсене пурне те ĕçлеттермелле. Çакна районри хăшпĕр колхозсен руководителĕсем халĕ те ăнланса илмен-ха. Район уборкăра кунран кунах юлса пырать пулсан та, чылай колхозсенче, жнейкăсем халĕ те ĕççĕрех лараççĕ, МТС комбайнсемпе тырă пухса кĕртес ĕçе халĕ те кирлĕ пек тытăнман.

Красноармейски район республикăри ытти районсенчен уборка ĕçĕсемпе юлса пынин тĕп сăлтавĕ ĕнтĕ ĕçре машинăсене хакламаннинче, вĕсемпе ĕçлеме юратманнинче. Машинăсемпе туллин усă куракан колхозсем уборка ĕçĕсенче пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ. Типçырма ялсоветĕнчи «Пахарь» колхозра (председателĕ Иванов юлташ) кулленех виçĕ жнейкăпа тырă выраççĕ, çавăн пекех чылай колхозниксем кĕреплеллĕ çавасемпе выраççĕ. 4 кун хушшинче кунта 90 гектар тырă вырнă, вăл шутра виçĕ кун хушшинче жнейкăсемпе 60 гектар вырса пуçтарнă. Колхозница Е. Филиппова юлташ кĕреплеллĕ çавапа кунне 0,40 гектар тырă вырать тата вырнине хăех çыхса пырать.

Карапай ялсоветĕнчи Войков ячĕпе тăракан колхозрах ĕç пачах урăхла. 3 жнейка пур, виççĕшĕ те ахалех лараççĕ. Колхоз председателĕ Сидоров юлташ машинăсем усăсăр ларнăшăн пăшăрханмасть. Малтан туса хатĕрленĕ уборка ĕçĕсен графикĕ тăрăх колхоз куллен 22 гектар тырă вырмалла, ĕçе кашни кун 123 çын хутшăнмалла. Анчах çак график пурри çинчен халĕ Сидоров юлташ та, бригадирсем те пачах манса кайнă. Уборка ĕçĕсем хăй тĕллĕн пулса пырасси çине шаннă. Столовăй та, ясли те уçман. Колхозниксем ĕçе кая юлса тухаççĕ. Кунне мĕнпурĕ те 11 гектар çеç выраççĕ.

Тырă тăкăнать. Тăккаланчăк вĕçĕ-хĕррисĕр. Кашни икĕ утăмрах 50 пучах тăкса хăварнă. Мĕншĕн-ха колхозсенчи агитаторсем, коммунистсемпе комсомолецсем çитменлĕхсене вăхăтра тӳрлетме тăрăшмаççĕ?

С. ШАДИН.

Тырпул хатĕрлемелли плана срокчен пурнăçа кĕртессишĕн тата Сталин юлташ патне пуринчен малтан рапорт яма право илессишĕн районсем хушшинче пуçланнă социализмлă ăмăрту августăн 10-мĕшĕ тĕлне мĕнле пынине кăтартакан

СВОДКА

Районсем	Ăмăртура миçемĕш вырăн йышăннă	Районсем	Ăмăртура миçемĕш вырăн йышăннă
Етĕрне	1	Красноармейски	15
Куславкка	2	Канаш	16
Сĕнтĕрвăрри	3	Ишлей	17
Октябрьски	4	Çĕмĕрле	18
Советски	5	Хĕрлĕ Чутай	19
Элĕк	6	Шăхасан	20
Вăрмар	7	Первомайски	21
Вăрнар	8	Йĕпреç	22
Калинино	9	Елчĕк	23
Сĕнтĕр	10	Чкаловски	24
Шупашкар	11	Улатăр	25
Çĕрпӳ	12	Кувакино	26
Тăвай	13	Шăмăршă	27
Комсомольски	14	Пăрачкав	28

Государствăна тырă срокчен парса татар

КУСЛАВККА. Государствăна тырă тăратмалали виççĕмĕш пилĕккунлăхри графика пирĕн район ирттерсе тултарчĕ. Августăн 5-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче районри икĕ колхозсăр пуçне ытти пур колхозсем те государствăна тырă парас ĕçе активлăн хутшăнчĕç. 53 колхозран 39-шĕ пилĕккунлăх графикне ирттерсе пурнăçларĕç.

Вăрнар районĕнчи колхозниксен чĕнĕвĕ, вĕсем пуçарнă социализмлă ăмăрту пирĕн районри колхозсене те, халиччен тунă ĕçсене пăхса тухса, малашне тата тимлĕнрех ĕçлеме чĕнет. Вăрнар районĕнчи колхозниксем тырпулсене ăнăçлăн пухса кĕртсе тата государствăна тырпул памалли обязательствăна срокчен пурнăçласа, Верховнăй Главнокомандующи Сталин юлташа чи малтан рапорт парассишĕн кĕрешеççĕ. Çакăншăн вĕсем социализмлă ăмăрту пуçарса ячĕç, республикăри колхозсене ăмăртăва активлăн хутшăнма чĕнчĕç.

Куславкка районĕнчи колхозсем ĕнерпе паян Вăрнар районĕнчи колхозниксен пуçарăвне сӳтсе-яврĕç. Ăна пысăк вырăна хурса ырларĕç. Тырпулсене ăнăçлăн пухса кĕртсе, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен парса татассишĕн хальхинчен нумай ытларах вăй хурса ĕçлеме пулчĕç.

Уборка ĕçĕнче малта пыракансен ĕç опычĕпе анлăн усă курни кирлĕ. Вĕсем пирĕн чылай. «Путь Ленина» колхозра тырпулсене хăвăрт та пысăк пахалăхпа вырса пынипе пĕрлех авăна та ăнăçлăн çапса пыраççĕ. Государствăна 1943 çулхи обязательствăсем тăрăх колхоз 108 центнер тырă пачĕ те. Авăна вĕсем электричество вăйĕпе çапаççĕ, анчах çапах та колхозра ĕçлеме пултаракан пĕр çын та сехете ĕççĕр ирттермест. Авăна тăпачăпа та, лаша вăйĕпе ĕçлекен молотилкăпа та çанталăк майлă чухне кунĕн-çĕрĕн çапаççĕ. Электричество вăйĕпе ĕçлекен молотилкăнах лаша вăйĕпе ĕçлеттермелле тунă. Кашни сехетпе усă кураççĕ. «Путь Маркса» колхоз виççĕмĕш пилĕккунлăхра государствăна тырă памалли графика 200 процент ытла тултарчĕ. Тĕштырăсене колхоз пурне те вырса пухрĕ. 55 гектар çинчи тырра капансене хывса лартнă. Тăкак пачах çук.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕçе татах вăйлатар, государствăна тырă срокчен парса татар! Вăрнар районĕнчи колхозниксем пуçарнă социализмлă ăмăртура малти ретре пыма тăрăшар.

И. ПОДКЛЕТНОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Государствăна кĕрхи тырăсем парса татрĕ

ÇĔРПӲ, августăн 12-мĕшĕ. (**Хамăр корр.**). Лĕпсер ялсоветĕнчи «Липсерия» колхоз членĕсем уборка ĕçĕсене вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ хăвăртлăхсемпе туса пыраççĕ. Кĕрхи тырăсене вĕсем августăн 9-мĕшĕнче вырса пĕтерчĕç. Авăн çапас ĕçе те лайăх организацилерĕç. Государствăна 1943 çулти обязательство тăрăх кĕрхи тырăсем парса татрĕ. Енер колхозăн пур бригадисем те кĕраки тума пуçларĕç.

Çавăн пекех «Красная Армия», «Новая сила» колхозсем те государствăна кĕрхи тырăсем парса татнă, кĕракинче иккĕмĕш кун ĕнтĕ тимлĕн ĕçлеççĕ.

И. МАЛГАЙ.

Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçлĕхе туиса

(Хамăр корреспондентран)

Эпир Вырăскас Пикшихри «Мотор» колхозăн хирĕнче. Пĕрремĕш бригадăри ĕçлеме пултаракан çынсем пурте ĕçре: хăшĕсем тырра çурлапа выраççĕ, теприсем машинăпа вырнă хыççăн кĕлте çыхаççĕ. Ялсовет исполкомĕн председателĕ коммунист К. Савельев жнейкăпа тырă вырать. Вăл яланах 4 гектар вырăнне 5—6-шар гектар выраканччĕ. Августăн 6-мĕшĕнче нихăçанхинчен те тухăçлăрах ĕçлерĕ. Орелпа Белгород хулисене нимĕç оккупанчĕсенчен хăтарни мĕнпур колхозниксене тăрăшса ĕçлеме хавхалантарчĕ. Савельев юлташ вăл кун, машинăна тата лайăхрах ĕçлеттерсе, 6,5 гектар тыррине вырса пуçтарчĕ. Вăл хăй лайăх ĕçленипе тата агитациллĕ-массăллă ĕçе витĕмлĕн туса пынипе колхозниксене ĕçре хавхалантарса пырать.

Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçлĕхе тарăнăн туйса тăрса, Варвара Краснова, Шура Ильина, А. Никифорова, Зоя Белова комсомолкăсем кулленех 0,20—0,22 гектар выраççĕ.

Агитколлектив (руководителĕ А. Тихонов юлташ) хăйĕн ĕçне хальхи вăхăт ыйтнă пек туса пырать.

Коммунистсемпе комсомолецсен ĕçри хастарлăхĕ мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене тухăçлăн ĕçлеме çĕклерĕ. Авă каçалăк умĕнче кăвакарнă çӳçлĕ мучи хыпаланса ĕçлет. Ку вăл—67 çулхи Степан Захарович. Унăн кĕçĕн ывăлĕ фронтра, ирсĕр тăшманпа çапăçать. Ĕçчен мучи тырă вырнă çĕрте çамрăксенчен пĕрре те кая ĕçлемест, кулленех 0,14—0,18 гектар вырать.

— Тĕлĕнмелле ку Çтапан мучирен, пĕр канмасăр ĕçлет. Пилĕкĕ те ыратмасть пулĕ,—тĕлĕнеççĕ колхозниксем, унăн каçалăкĕ çине пăхса.

— Эпир хирте тухăçлăн ĕçлени фронтра çĕнтерӳ тума пулăшать. Çакăн çинчен агитколлектив руководителĕ Тихонов юлташ лайăх каласа кăтартрĕ-çке. Манăн часрах çĕнтерӳ тăвас килет,—тет Степан Захарович, аллинчи тин çыхса хунă ыраш кĕлтине тĕм çине хурса.

Ним тĕлĕнмелли те çук: ылханлă тăшмана хăвăртрах çĕнтерсе тăкас ĕмĕтпе кунта 55 çулхи Анна Платонова, 64 çулхи Надежда Едукова колхозницăсем те нормăна 150—200 процент тултараççĕ, машина хыççăн кĕлте çыхакансем Г. Кузьмина, А. Ильина, Е. Тихонова, П. Давыдова тата çурлапа тырă выракансем Т. Кузнецова, К. Иванова колхозницăсем икшер норма тултарса ĕçлеççĕ.

Тырăсене машинăпа вырас ĕçе колхоз уйрăммăнах пысăка хурать. 4 жнейка пĕр чарăнмасăр ĕçлеççĕ. Комсомолец М. Васильев—6-мĕш бригадăри чи лайăх машиновед. Вăл кашни кун 5—5,5 гектар вырса пуçтарать.

Ĕç хĕрсе пырать. Паянхи кун тĕлне 170 гектар вырса, кĕлтесене çĕмеле хывнă, 18 гектар тыррине çапса государствăна панă.

В. ВЕÇЕЛОВ.
«Мотор» колхоз, Канаш р.

Çулпуç приказне ăнлантарса панă хыççăн

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, августăн 11-мĕшĕ. (**Хамăр корр.**). Кăнтăрлахи апата «Пчелкино» колхоз членĕсем паян пурте пĕр çĕре ларчĕç. Вĕсем умне фронтовик Федор Галактионов тухса тăчĕ. Аллинче унăн халĕ çеç килнĕ çĕнĕ хаçат. Вăл хытă сасăпа вĕсене Сталин юлташ Орелпа Белгород хулисене ирĕке кăларнă ятпа войскăсене панă приказа вуласа пачĕ. Колхозниксем тимлĕн итлерĕç. Кашниех хăйсен шухăш-кăмăлĕсене туха-туха каларĕç. Мефодьева колхозница государствăна çак кунсенчех тырă парса татас, орловецсемпе белгородецсем валли ăшă тумтирсем хатĕрлеме пуçлас шухăша каласа пачĕ. Колхозниксем фронтри боецсем пек хастарлăн ĕçлесе, августăн 15-мĕшĕ тĕлне пĕтĕм тырпула вырса пухса, капансене хывса лартма обязательство илчĕç.

Тепĕр кунах колхозниксем Сталин юлташ приказĕ çине ответлесе государствăна хĕрлĕ обозпа 30 центнер тырă леçрĕç. Çапла вĕсем 15 кунхи графика пĕтĕмпех пурнăçларĕç. Пĕр кун хушшинче 5 гектар çинчи тырра çапрĕç, 10 гектар çинчен кĕлте кӳрсе капана хыврĕç. Ыраш, тулă тата урпа вырса пĕтернĕ, халĕ пăрçа çулаççĕ.

Сталин юлташ приказне «Труд» колхозра та тĕплĕн ăнлантарса пачĕç. Унччен колхозра кунсерен 7-шер гектар тырă вырнă пулсан, халĕ Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса кашни кунах 12 гектар выраççĕ. Ульяна Никитина, Мария Максимова колхозницăсем кулленхи нормăна 170 процент тултарса пыраççĕ.

Н. ГЛАДКОВ.

Колхозри авăнсем

КОМСОМОЛЬСКОЕ, августăн 12-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Çанталăк йĕпе тăни—колхозсем умне пысăк йывăрлăх кăларса тăратрĕ. Уборка ĕçĕсен ăнăçлăхĕ çав йывăрлăхсене вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек çĕнтерсе пынинчен килет.

Пирĕн районри колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем тырпулсене пухса кĕртес ĕçре тăкаксенчен упранмалли пур майсемпе те туллин усă курма тăрăшаççĕ. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ тапхăрти çамăр вăхăтĕнчех, малашне те çанталăк йĕпе тăрассине вăхăтра шута илсе, 6 авăн туса лартрĕ. Кашни авăна 10 урапа тырă кĕрет. Çапла Чапаев ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ кунсенче государствăна 120 центнер тырă типĕтсе çапса пачĕ. Халĕ те авăнсемпе кулленех 60 урапа типĕтсе çапаççĕ. Колхоз председателĕ Полетаева юлташ вăрçă вăхăтĕнчи пек çаврăнăçуллăн ĕçлет.

«Красный борец» колхозра çămăр çăвать пулсан та тырă выраççĕ. Вырнă тырра çийĕнчех авăнсем патне турттараççĕ, типĕтсе çапса пыраççĕ. Ĕç ăнăçлă пулса пырать. «Двигатель революции» колхозра та 5 авăн туса лартрĕç, кашни авăна 20 урапа кĕлте кĕрет. Кунĕн-çĕрĕнех тырра типĕтеççĕ, хĕрсех авăн çапаççĕ, çапса çитереймен типĕтнĕ тырра çумăр çуман самантра капансене хывса лартаççĕ.

Çак асăннă колхозсем пек кашни колхозах ĕçлеме пултарать. Çанталăк условине çĕнтермелле, кирек мĕнле çанталăк тăрсан та тырпула уйран тăккаламасăр пухса кĕртме тăрăшас пулать.

И. ГЕОРГИЕВ,
ВКП(б) Комсомольски райкомĕн секретарĕ.

КĔСКЕН

▲ Чкаловски районри «Маяк» колхозри 75 çулхи Г. Хасьянов кашни кун çавапа çулса нормăна 160 процент тултарса пырать. Çавăн пекех 60 çулхи Ф. Шайдуллина та ĕç нормине 120 процентран кая мар тултарса ĕçлет.

▲ Шăхасан районĕнчи «Красный партизан» колхоз ыраш вырса пуçтарас плана июлĕн 27-мĕшĕнче срокчен пурнăçланă. План тăрăх 6 кунта вырса пĕтермелле пулсан, унта пилĕк кун çурăра вырса пуçтарнă.

▲ Тутар республикинче Кукморски районра 2—3 çултанпах Камар Сибгатуллина çурлапа тырă вырас тĕлĕшĕнчен малта пырать. Вăл июлĕн 22-мĕшĕнче 0,4 гектар, июлĕн 23-мĕшĕнче 0,5 гектар вырнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 12-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

çине гранатăсем вăркăтарма пуç-ланă. 15 автомашина тата 2 автоцистерна пĕтнĕ. 40 гитлеровеца вĕлернĕ. Витебск облаçĕнчи тепĕр отрядри партизансем тăшманăн çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Разведчик-партизансем çакна пĕлсе тавăрнă: нимĕçсен çулсем тÿрлетекен команди вагон ванчăкĕсем айĕнчен 93 вилĕ гитлеровеца тата 130 аманнă нимĕçе туртса кăларнă.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсен тата вĕсене пулăшаканссен тискерле ĕçĕсене пăхса тухнă Краснодарти суд гитлерла ирсĕрсен çав тери усал ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларчĕ. Çакă лайăх курăнчĕ: фашистла палачсем советсен ним айăпсăр çыннисене 7.000 çынна яхăн «душегубка» текен ятарласа тунă автомашинăсен айĕнче углерод окисĕн газĕпе чыхăнтарса вĕлернĕ. Юлашки вăхăтра палла пулса тăнă тăрăх, «душегубка» текен автомашинăсем Краснодарти гестаповецсен çеç пулман иккен. Çавăн пек автомашинăсем нимĕçсем оккупациленĕ территорисем çинче ĕçлекен гестапон пĕр пур отделенийĕсенче те пур иккен. «Душегубка» текен автомашинăсене çăмахран каласан, Смоленскра, Могилевра тата ытти хуласенче те пур. Çав машинăсене хăйсен куçĕпе курнă нимĕç салтакĕсем каласа панă тăрăх, гестаповецсемпе вĕсене пулăшакансем Смоленскри хулинче нумай çĕр çынна çав автомашинăсем ăшĕнче чыхăнтарса вĕлернĕ. Çак кунсенче çакăн пек хыпар илнĕ. Могилев хулинче те фашистсем çак хăйсем шухăшласа кăларнă «душегубкăна» анлă усă курассĕ. Пĕр июнь уйăхĕнче кăна гитлерла çынçисенсем çав «душегубкăсем» ăшĕнче совет гражданĕсене 400 çынна ытла вĕлернĕ. Могилевра тĕрмерен пĕрре лартса кайса, фашистла ирсĕрсем 60 хĕрарăмпа пĕчĕк ачана чыхăнтарса вĕлернĕ.

Çурçĕр Кавказ фронтĕнчи Çар трибуналĕ фашистла çынçисенсене сутăнса тăван çĕршыва сутакансен ушкăнне тивĕçлипе тавăрчĕ. Мирлĕ гражданĕсене массăллăн чыхăнтарса тата урăх майсемпе те вĕлерекенсене ертсе пыракан организаторсем—Руоф генерал-полковник, гестапо начальникĕ—Кристман полковник тата гестапо ытти ирсĕрĕсем тухса тарма ĕлкĕрнĕ. Вĕсен ĕçне палăртса тунă. Анчах вĕсем те нимĕçе тарса çăлăнаймĕç. Вăхăт çитĕ, Краснодарта тискер ĕçсем тунă нимĕç палачĕсене айăпланакансен пукане çине лартассĕ. Ун чухне вĕсемпе пĕрле Смоленскра, Могилевра тата нимĕçсем ытти хăйсем вăхăтлăха йышăннă хулисенче тискер ĕçсем тунă ирсĕрсене те çав пукан çине лартĕç.

Икĕ столица ăмăртăвĕ

Йошкар-Ола делегацийĕ Шупашкарта пулчĕ

Икĕ столица—Шупашкарпа Йошкар-Ола хушшинчи социализмлă ăмăрту вăйланса пырать. Çак кунсенче Шупашкара Йошкар-Ола хулинчен делегаци килчĕ.

Делегаци участникĕсем пирĕн столица çинчи обязательствисене пĕр уйăх хушши, ытларах вăхăтра мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине палласа пăхрĕç. Вĕсем Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра, электростанцире, çĕнĕ электростанция строительствинче, табак фабрикинче, больницăсенче стационарсенче, ача сургатмалли çуртра, ачасем пĕрремĕш номерлĕ ясличче, ачасен 14-мĕш номерлĕ садĕнче, хулара ытти чылай предприятисемпе учрежденисенче пулчĕç. Вĕсем ĕçсемпе тĕплĕн паллашрĕç.

Делегаци участникĕсем Йошкар-Олана тухса каяс умĕн ВКП(б) Обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Чарыков юлташ патĕнче пулчĕç. Вĕсем çакăн пекех хуçалăх организацисен руководителĕсемпе те тĕл пулса калаçрĕç.

Делегаци руководителĕ—ВКП(б) Йошкар-Ола горкомĕн секретарĕ З. Р. Болотовский юлташ хăйĕн шухăш-кăмăлĕсене «Чăваш Коммуни» хаçат ячĕ валли çырса пачĕ. Алла çыпа ăнăн статьине пичетлетпĕр.

Малти вырăна тухассишĕн

Совет ĕççыннисем мухтавлă Хĕрлĕ Çара ытларах та ытларах пулăшассипе кунсерен ырми-канми тăрăшаççĕ. Отечественнăй Аслă вăрçă пуçланнă тапхăрта ĕççыннисен ĕçри пултаруллăхĕ тата пусăрулăхĕ çĕклесен лайăх кăтартăва çитнĕ. Акă, пирĕн социализмлă ăмăрту сарăлса пынине кăтартакан пĕр тĕслĕх. Акă, пирĕн Мари республики Чăваш республикипе, республикăсен столицисем Шупашкарпа Йошкар-Ола ăмăртаççĕ.

Эпир, Йошкар-Ола хулинчи ĕççыннисем уйăрса янă делегаци килсе, çак кунсенче Шупашкар ĕççыннисен ÿсĕмĕсемпе паллашрăмăр. Чăваш республикин столицин — Шупашкарăн сăн-сăпачĕ улшăннă. Хулара çĕнĕ пысăк предприятисем ĕçлеççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕсем производство планне ирттерсе тултараççĕ. Главнăй инженер пулса Якунин юлташ ĕçлекен завод виçĕ уйăх хушши ĕнтĕ Оборонăн Государственный Комитечĕн ялавне хăй аллинче тытса тăрать. Пирĕн хамăр хулари предприятисене те çавăн пек ĕçлеттерес килет.

Вăрçă вăхăтĕнче те Шупашкарта строительство хăвăрт пырать. Çĕнĕ предприятисем, пурăнмалли çуртсем тăваççĕ, хула урамĕсене асфальт сараççĕ. Карл Маркс тата Ленинградская урамĕсене пĕтĕмпех асфальт сарнă. Вĕсем пысăк хуласенчи урамсем пекех илемлĕ те таса. Хулара ачасемшĕн тăрăшни лайăх палăрать. Ятарласа тунă ача çуратмалли лайăх çурт пур, ачасем валли уйрăм парк уçнă, ачасен яслисем чылай. Уйрăмăнах пире ачасен 14-мĕш номерлĕ сачĕ килĕшрĕ. Унта ачасем вăхăта савăнăçлăн ирттереççĕ. Ачасен тата сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен учрежденисем кашниех подсобнăй хуçалăх организациленипитех те аван.

Хула строительствинче тата хулари предприятисен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе сахал мар ĕç тунă. Çапах мĕн кирлине пурне те туса çитернĕ теме çук. Хулари хăшпĕр урамсене тата килкартисене тасатса тăмаççĕ. Çĕнĕрен çуртйĕрсем, çулсем тума панă укçа-тенкĕпе пĕтĕмпех усă курман. Атăл хĕрринче пулин те шыва кĕме лайăх вырăн туман. Сывлăха сыхлас ĕçре те çитменлĕхсем пур. Хулари поликлиникăра водолечебница тата грязелечебница ĕçлеменнине нимĕнле те тÿсме çук.

Сĕт кухнине тăвасси ерипен пырать. Куллен палăракан çитменлĕхсенчен пирĕн вăл—сутулăй организацисем сулахви вăхăтра ĕçмелли шывсене суту-илÿ тăвассине начар организациленĕ пулать. Хулара нарлайăй агитаци ĕçне кирлĕ пек йĕркелемен. Урамсене, парксене, лозунгсем, плакатсем сахал. Совет Информаци Бюровĕн сводкисене туха çакман. Партипе советăн хулари организацисене тăрăшсан, вăл çитменлĕхсене сывах вăхăтрах пĕтерме пулать.

Эпир кунта Шупашкар ĕççыннисем пирĕн столица—Йошкар-Ола ÿсĕмĕсемпе паллаштарасшăн. Совет влаçĕ çĕнтернĕренпе пирĕн хула палламалла мар улшăнчĕ. Революциччен хальхи пирĕн столицăна Царево-Кокшайск тесе каланă. Унта 1874 çулта пурĕ те 1193 çын кăна пурăннă. Хулара пурăнакан халăх хисепĕ ун хыççăнхи çулсенче те сахал ÿснĕ. 1914 çула çитиччен, 40 çул хушшинче, хулара пурĕ те 607 çын кăна хутшăннă. Хулара промышленность предприятисем, библиотека, театр пулман. Хулари халăх тĕттĕмлĕхре пулнă. Халĕ пачах урăхла. Хулара çĕнĕрен тунă предприятисем ĕçлеççĕ. Шкулсем, театрсем, медицина учрежденисем пур. Пурăнмалли паха та пысăк çуртсем сахал мар туса лартнă. Хальхи вăхăтра хулара 38 пин çын пурăнать. Предприятисенчен нумайĕшĕсем плана ирттерсе тултараççĕ. Икĕ завод июнь уйăхĕнче Пĕтĕм Союзри ăмăртура виççĕмĕш вырăн йышăнчĕç. Хулари промышленность, пĕтĕмпе илсен, çурçулти плана 101,9 процент, артельсем 119,5 процент тултарчĕç, июльти плана та ирттерсе тултарнă. Июль уйăхĕнче çĕнĕ электростанци ĕçлеме пуçларĕ.

Халĕ предприятисемпе учрежденисенче хĕле хатĕрленесси пырать. Çуртсене, хваттерсене юсаççĕ. Пурĕ 14 çурт, 125 хваттер юсамалла, ку таранччен 7 çурт, 97 хваттер юсанă. Хулари кĕперсене юсас, тротуарсем тăвас плана ирттерсе тултарнă.

Пирĕн хула ĕçĕнче те çитменлĕхсем пур-ха. Пирĕн Йошкар-Олари ĕççыннисем вăл çитменлĕхсене çывăх вăхăтрах пĕтерсе, икĕ республика столицисен ăмăртăвĕнче пур тĕлĕшпе те мала тухассишĕн кĕрешеççĕ.

З. БОЛОТОВСКИЙ,
Делегаци руководителĕ, ВКП(б) Йошкар-Ола горкомĕн секретарĕ.

Государствăна брынза пăраççĕ

ЭЛĔК. («Чăваш Коммуни» корр.) Куракăшри «Безбожник» колхозăн кăçал государствăна 31 килограмм брынза памалла. Ку таранччен вăл 38 килограмм панă. Брынза тума кунта халĕ те сурăхсене сăваççĕ. Уйрăм сурăхсем куннe 1 литра яхăн сĕт параççĕ.

Писенерти «9 съезд ВЛКСМ» колхоз та брынза памалли обязательствăна ытлашшипех тултарчĕ, Уйрăм колхозниксем те брынза тума государствăна сурăх сĕчĕ тата качака сĕчĕ параççĕ. Ехремкассинчи «1-ое мая» колхоз членĕсем Ефим Анисимов 4,5 литр сурăх сĕчĕ парас вырăнне 5,25 литр, Нестер Марков 1,5 литр вырăнне 1,75 литр, Куракăшри «Безбожник» колхоз членĕ Афанасий Павлов 1,5 литр вырăнне 2,25 литр пачĕç.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Наркомместпром предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи июль уйăхĕнчи итогĕсем

Чăваш АССР Совнаркомĕ Наркомместпром предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи июль уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухрĕ. Ăмăртура Канашри горпромкомбинат, Ишлейри тата Шăхасанти райпромкомбинатсем мала тухнă тесе йышăнчĕ.

Канашри горпромкомбинат июль уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци тата ширпотреб енĕпе 126,3 процент тултарнă, çапла вара продукци кăларассине июньрипе танлаштарсан 16 процент ÿстернĕ. Июль уйăхĕнче вăл урапа сĕрмелли çу, сурăх тир татăкĕсенчен çилĕм туса кăларассине тата çăм пухса илессине организациленĕ.

Çаксене шута илсе Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Канашри горпромкомбинат аллинчех (управляющийĕ Шлапак юлташ, горисполком председателĕ Белоусов юлташ) хăвармалла тата ăна горпромкомбинат ĕçĕнче палăрнă работниксене премилеме 15 пин тенкĕ укçа уйăрса пама йышăннă.

Ишлей райпромкомбиначĕ июль уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци тата ширпотреб енĕпе 128,8 процент тултарнă. Ку июнь уйăхĕнчинчен 36 процент нумайрах шутланать.

Ишлей райпромкомбинатне (управляющийĕ Хорасев юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Херсонов юлташ) ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 10 пин тенкĕ укçа пама йышăннă.

Шăхасан райпромкомбиначĕ июльти плана пĕтĕм продукци кăларас тĕлĕшпе 132,7 процент тата ширпотреб енĕпе 105,5 процент тултарнă. Çапла пĕтĕм продукци кăларассине июнь уйăхĕнчен 27 процент ÿстернĕ.

Шăхасан райпромкомбинатне (управляющийĕ Платонов юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Скворцов юлташ) ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 5 пин тенкĕ укçа пама йышăннă.

Улатăрти горпромкомбинат йывăçран путушасем тата вĕренекенсем валли карандашсем хумалли арчасем тăвас плана тултарман пирки преми илейменнине палăртнă. Горсовет исполкомĕн председателĕн заместительне Гуськов юлташа, горпромкомбинат управляющине Филиппов юлташа август уйăхĕнче плана пур ассортиментсем тăрăх та тултармалла тума хушнă.

Совнарком июль уйăхĕнче Элĕк, Вăрнар, Калинино, Куславкка, Комсомольски, Кувакино, Йĕпреç, Советски, Сĕнтĕр, Вăрмар, Çĕрпÿ, Чкаловски, Шăмăршă, Çĕмĕрле, Елчĕк, Тăвай, Пăрачкав, Шупашкар райпромкомбиначĕсем тата Шупашкар горпромкомбиначĕ лайăх ĕçленине палăртрĕ.

Кунсăр пуçне Совнарком июль уйăхĕнче Красноармейски, Хĕрлĕ Чутай, Первомайски, Етĕрне райпромкомбиначĕсем начар ĕçленине палăртса, райсовет исполкомĕсен председателĕсемпе райпромкомбинат управляющисене август планне тултарас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнма хушса хăварнă.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ВКП(б) Канаш райкомĕн пленумĕ

Çак кунсенче ВКП(б) Канаш райкомĕн черетлĕ пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум кăçалхи майăн 23-мĕшĕнчен пуçласа августăн 8-мĕшĕччен ВКП(б) парти ретне илес ĕç районри парти организацинче мĕнле пулса пыни тата колхозсем валли кадрсем хатĕрлессипе вĕсене ÿстерес ĕç мĕнле пыни çинчен сÿтсе-яврĕ.

Малтанхи ыйтупа ВКП(б) райкомĕн секретарĕ А. Н. Добродушев юлташ доклад туса пачĕ.

—Отечественнăй вăрçă кунĕсенче пирĕн парти ретне тăван çĕршыва чунтан парăннă колхозниксемпе колхозницăсем, служащисем кĕреççĕ,—тет докладчик. Отчет вăхăтĕнче тĕлне парти ретне 19 çынна илнĕ. Вăл шутран ВКП(б) членне 5 çынна, ВКП(б) членĕн кандидатне 14 çынна илнĕ. А. Кукушкина юлташ «Малалла» колхозăн председателĕ пулса ĕçлет. Вăл ертсе пыракан колхоз çураки ĕçĕсене кĕске вăхăтра пысăк пахалăхпа ирттерчĕ. Уборка ĕçĕсенче те колхоз малта пырать. ВКП(б) райкомĕ Кукушкина юлташа ВКП(б) членĕн кандидатне илчĕ. Трактористкăсем Михайлова, Захарова юлташсем çураки вăхăтĕнче куллен задание 165 процент тултарса пынă. Вĕсем 783 килограмм ытла горючи перекетленĕ. Вĕсем халĕ ВКП(б) членĕн кандидачĕсем.

Пленум парти ретне ÿстерес ĕç уйрăмăнах колхозсенчи пуçламĕш парторганизацисенче начар тăнине палăртрĕ. Карăклă, Ачча ялсовечĕсем çумĕнчи пуçламĕш парторганизацисем çак ыйтупа сахал интересленнĕ.

Иккĕмĕш ыйтупа колхозсем валли кадрсем хатĕрлессипе вĕсене вĕрентесси çинчен ВКП(б) райкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ Л. П. Знаменская юлташ доклад туса пачĕ. Докладчик колхозсем валли кадрсем хатĕрлес ĕç районра 25 уйăх хушшинче мĕнле пулса пыни çинчен чарăнса тăчĕ. Çак вăхăт хушшинче колхозсенчи ертсе пырас ĕçре ĕçлеме 419 çынна курссем витĕр вĕрентсе кăларнă. Вăл шутран 41 çын ферма заведующийĕсем, 7 çын колхоз председателĕсем пулса тухнă.

Отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа 18 колхоз председательне ĕçрен хăтарма тивнĕ. Вĕсем хăйсене шанса панă ĕçе тивĕçлĕн туса пырайман. Коммунист Красномиров юлташ «Идея Ленина» колхозра икĕ çул хушши председатель пулса ĕçленĕ. Анчах вăл колхозри ĕçе йĕркелесе ярайман. Çавăн пекех «Хунав» колхоз председателĕ Васильева та йĕркеллĕн ĕçлесе пыман. 1943 çулта 8 колхоз председательне улăштарса лартма тивнĕ. Колхозри хăшпĕр бригадирсемпе ферма заведующийĕсене те хăшпĕр чух улăштарса лартнă.

Ку ыйту тăрăх пленумра 6 çын тухса калаçрĕ. Пленум районра колхозсем валли кадрсем хатĕрлес ĕç начар тăнине палăртрĕ. ВКП(б) райкомĕн кадрсен пайĕ колхозсенчи кадрсене вĕрентсе пырас ĕç çине çителĕклĕн çаврăнса пăхман.

Кăçалхи уборка пуçланас умĕн колхозсенче машиноведсем кирлĕ чухлĕ хатĕрлесе çитермен пирки уборка ĕçĕ районра чăтма çук кая юлса пырать.

Пленум кашни ыйтупах тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ.

Ф. МАЛЫШКИН.

Агитациллĕ ĕç çитĕнÿсем тума пулăшать

КАЛИНИНО. (Телефонпа). М. Быков коммунист ертсе пыракан «Искра» колхоз пур ĕçсене те вăхăтра пурнăçласа пырать.

Пирĕн войскăсем нимĕç оккупанчĕсене хирĕç ăнăçлăн наступлени туса пыни колхозниксене татах та хастарлăнрах ĕçлеме хавхалантарчĕ. Колхоз кĕрхи тырăсене кĕске вăхăт хушшинчех вырса, кĕлтесене капана хыврĕ. Халĕ колхозниксем çурхи тырăсене вырнипе пĕрлех авăн çапас ĕçе тытăнчĕç. Ялсовет исполкомĕн депутачĕ Ф. Романова юлташ тырă вырнă çĕрте кулленхи нормăна 200 процент тултарса пырать, ыттисене пример кăтартать. Ана кура учительница Н. Романова, Е. Соловьева, А. Кондратьева, Н. Порфирьева колхозницăсем те кунсеренех 0,12 гектар вырас вырăнне 0,17—0,20-шер гектар выраççĕ.

Кунта агитациллĕ-массăллă ĕçе колхоз председателĕ Быков юлташ хăй ертсе пырать. Вăл çĕнĕ хыпарсене колхозниксем патне çийĕнчех илсе çитерет. Çĕнĕ хаçатсем килсен яланах ăнланмалла вуласа парать. Стена хаçачĕсене вăхăтра кăларса тăрассишĕн çине тăрса ĕçлет.

В. ЗАЙЦЕВ.

МОПР-ăн Сĕнтĕр райкомĕ куçса çÿрекен ялав илчĕ

Вăрçă пуçланнă хыççăн МОПР-ăн Сĕнтĕр райкомне ертсе пыма Бернштейн юлташа лартнă. Вăл колхозсенче агитациллĕ-массăллă ĕçе ывăнмасăр туса пынипе пула, МОПР членĕсен йышĕ виççĕ хут ÿсрĕ. 1942 çулти финанс планне 567 процент тултарнă. 1943 çулта районра МОПР ĕçĕ татах лайăхланчĕ. Интернационаллă-массăллă ĕçе план тăрăх туса пычĕç. Районри МОПР активисчĕсем ултă уйăх хушшинче 19 доклад, 350 калаçу ирттернĕ. Çав ĕçе вĕсем фашизма хирĕçле вечерсем туса, радио тăрăх калаçнипе районри хаçатсем, стена хаçачĕсем çине çырса тăнипе те туса пыраççĕ. Ăнлантару ĕçне яланах туса тăнипе, ирĕклĕ тÿлевсен планне кăçалхи çурçулшăн 2237 процент тултарнă. Çакăнпа пĕрлех фронтовиксен семйисене пулăшассипе те пысăк ĕçсем тунă. 20 кĕпелĕх пир, чăлхасем, сăватсапасем пухса панă. Ултă уйăх хушшинче МОПР членне 451 çынна илнĕ. Районри чи лайăх агитаторсенчен пĕри—учительница Яшмолкина юлташ шутланать. Çавăн пекех агитаци ĕçне Бочаева, Петухова юлташсем те лайăх туса пыраççĕ.

Çакăн пек ĕçленĕшĕн МОПР-ăн Сĕнтĕр райкомне МОПР Обкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне панă. Ялава илнĕ чухне Бернштейн юлташ тата лайăхрах ĕçлеме сăмах пачĕ.

Г. ПЛАТОНОВ.

Тасалăх комиссийĕ аван ĕçлет

КУСЛАВККА. Çатрăк ялсовет исполкомĕн сывлăха сыхлас енĕпе ĕçлекен секцийĕ колхозниксен килхушшисемпе пÿрт-çурчĕсене тасалăх енчен асăрхаса тăма 10 çынран комисси уйăрнă. Çав комисси кашни 10 кун хушшинче колхозниксен килхушшисене, урамсене, пÿртсуртсене тасалăх енчен тĕрĕслесе çÿрет. Çакна пула ĕнтĕ колхозниксем хăйсен кил-çуртчĕсене таса тытма хăнăхса çитнĕ. Комисси хăй туса ирттернĕ ĕç çинчен е сĕнĕвĕсем çинчен çийĕнчех ялсоветне пĕлтерет. Кун хыççăн ялсовет исполкомĕн председателĕ Ф. Бубнов юлташ кирлĕ мерăсем йышăнать е кăтартусем парать.

М. ИЛЬИН.

Пушартан сыхланас ĕçе вăйлатар

КАЛИНИНО. Уйкас Юндабари «Новая жизнь» колхозăн дружина начальникĕ П. Чернов пушартан сыхланас ĕçри обязанноçне мансах кайнă. Кăçхине те, кăнтăрла та хурал тăмаççĕ. Дружина сарайĕн алăкĕ яланах хупă. Вĕсене икĕ лаша панă пулсассăн, иккĕшĕ те ĕçе каяççĕ. Фермăран е лаша витинчен тислĕк турттараççĕ. Дружина начальникĕ хăй те ăçта килчĕ унта çапкаланса çÿрет. Кăç пулсассăн фронтовиксен пахчисене ухтарса çÿрет.

Нумаях пулмасть Мăн Явăшра пĕр хуçалăх çунса кайрĕ. Сисмесĕр тухнă пушара нихăш дружина та вăхăтра пырса сÿнтерме пултарайман. Таврари ялсенчи дружинăсем пушар çунса пĕтсен çеç çитме ĕлкĕрнĕ.

Пушартан сыхланассине уйри тырпула пухса кĕртнĕ чух уйрăмах вăйлатмалла.

Вл. ГОРШКОВ.

ХРОНИКА

СССР Верховный Совет Президиумĕ Федор Тарасович Гусев юлташа, Совет Союзĕн Канадăри посланникĕн ĕçĕсенчен хăтарса, Совет Союзĕн Великобританири чрезвычайнăй тата полномочнăй посолĕ вырăнне лартнă.

Вĕренÿ çулне хатĕрленмелле

ÇĔРПУ. (Телефонпа). Районри малта пыракан шкулсем çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленсе çитрĕç. Анчах та пур шкулсем те вĕсен примерĕсемпе ĕçлемеççĕ-ха.

Акă Лĕпсерти туллимар вăтам шкул (директорĕ М. Яковлева) паянхи куна çитсе те вĕренÿ çулне хатĕрленме тытăнман. Шкулăн хĕлле хутма вутă пĕр сыпă та çук, шкул чÿречисем çĕмрĕк, хăш-пĕр кăмакисене юсамалла, шуратса тирпейлемелле, шыв тытмалли баксем юсавсăр, кăçал шкула пыракан ачасене халĕ те шута илсе тухман, ачасене вĕренме учебниксем çитмеççĕ.

Лĕпсер шкулĕ çĕнĕ вĕренÿ çулне çапла начар хатĕрленнине райçутĕç пайĕ асăрхамасть.

И. МАЛГАЙ.

Чăваш АССР Прокуратуринче

ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1943 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановлениe пăснăшăн «Октябрь» колхоз председательне (Первомайски район) Е. И. Коклимова судпа айăпламалла тунă. Вăл, государствăна пĕр килограмм тырă памасăрах, колхозниксене аванс шучĕпе 20,5 центнер тырă салатнă. Çавăн пекех «Ленинский призыв» (Куславкка районĕ) колхоз председательне Смирнова та ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленине пăснăшăн—колхозниксене государствăна панă тыррăн 15 процентĕ вырăнне 100 процентĕ чухлĕ панăшăн—судпа айăпламалла тунă.

Пĕлтерÿ

Августăн 14-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, Н. К. Крупская ячĕпе тăракан садра лекци пулать. Лекци теми: **«А. С. Пушкин—пирĕн Тăван çĕршывăн çулăмлă патриочĕ».**

Лекцие филологи наукисен кандидачĕ **М. П. Старенков** юлташ вулать.

Билетсене сад кассинче сутаççĕ.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

РСФСР НАРКОМЗЕМĔН СĔНТĔРВĂРРИНЧИ ÇĔРЙĔРКЕЛÿПЕ МЕЛИОРАЦИ ТЕХНИКУМĔ

çĕрйĕркелÿ тата гидротехника отделенийĕсен пĕрремĕш курсĕсене студентсем илесси çинчен пĕлтерет.

Гидротехника отделенийĕ вăтам образованиллĕ гидротехниксене хатĕрлет. Отделенирен çак ĕçсене: гидротехника сооруженийĕсем, пĕвесем, пĕверен ытлашши шыва юхтармалли шăтăксем, çаврака тата шахтăллă çăлсем тăвас тĕлĕшпе шыравсене туса ирттерес, проектсем хатĕрлес тата çав сооруженисене туса лартас ĕçсене, шурлăхлă çĕрсене типĕтес, тип çĕрсене шăварас, искусственнăй йĕркепе çумăр çутарас, çĕре таран тата таранмар пăраласа шăтарас, çавăн пекех тата колхозсемпе совхозсем тата МТС-сем валли шыв пăркисемпе гидроэлектростанцисем лартас ĕçсене лайăх пĕлекен гидротехниксем вĕренсе тухаççĕ.

Çĕрйĕркелÿ отделенийĕ çĕрйĕркелÿ техникĕсене хатĕрлет. Ку отделенирен çак ĕçсене лайăх пĕлекен çĕрйĕркелÿ техникĕсем вĕренсе тухаççĕ: ялхуçалăх карттисем тумашкăн, çул мĕнле туса каймалли проектсем тумашкăн, промышленность сооруженийĕсемпе пурăнмалли çуртсем лартма кирлĕ проектсем тумашкăн вырăна тăрăхла тата çÿлелле ÿкерсе илес ĕçĕн геодези техникине (теодолитпа тата мензолпа ÿкерсе илессине), нивелировка тăвассине лайăх пĕлекенсем, çавăн пекех тата МТС-сен, совхозсен, колхозсен хуçалăхлă центрĕсем валли çĕр уйăрса парса планировка туса пама лайăх пĕлекенсем вĕренсе тухаççĕ.

Техникумра виçĕ çул вĕренмелле.

Техникума 15 çулхи çамрăксенчен пуçласа 35 çула çитнĕ çынсене, туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнисене илеççĕ.

Заявленисене сентябрĕн 25-мĕш числиччен илеççĕ. Заявленисемпе пĕрле çак документсене памалла: вĕренсе тухни çинчен калакан удостоверени, сывлăх çинчен врач панă справка, автобиографи тата сăн ÿкерчĕкĕсем иккĕ.

1941, 1942 тата 1943 çулсенче туллимар вăтам шкултан „отлично" тата „хорошо" паллăсемпе вĕренсе тухнисене, çавăн пекех тата вăтам шкулăн 8-мĕш, 9-мĕш тата 10-мĕш класĕсенчен вĕренсе тухнисене Техникумăн 1-мĕш курсне испытанисемсĕрех илеççĕ. Испытанисĕрех Хĕрлĕ Çартан таврăннисене илеççĕ, вĕсем туллимар вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисенчен кая мар пĕлеççĕ пулсан; ыттисене пурне те экзаменпа илеççĕ. Экзаменсем сентябрь уйăхĕн 25—30-мĕш числисенче пулса ирттеççĕ, вĕсем çак предметсемпе пулаççĕ: математика, вырăс чĕлхи, СССР Конституцийĕ. Çав предметсене туллимар вăтам шкулта вĕрентекен программăра кăтартнинчен кая мар пĕлмелле.

Вĕренме илнисене пурне те общежитие вырнаçтараççĕ, çывăрмалли хатĕрсем параççĕ.

Вĕренме илнĕ отличниксене тата экзаменсене пур предметсем тăрăх та „отлично" паллăпа панисене государство стипендине параççĕ.

Вĕренме октябрь уйăхĕн 1-мĕш числинче тытăнаççĕ.

Техникумăн адресĕ çапла: гор. Мариинский Посад, Чувашской АССР, улица Ленина, дом № 3. Техникум землеустройства и мелиорации.

ТЕХНИКУМ ДИРЕКЦИЙĔ.

Шупашкарти армăн комбинатне **старши бухгалтер** кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Урицкий урамĕ, 15. Телефон 2—16. 3—1

Торгăн Шупашкарти отделенийĕ

1942 çулта пахча-çимĕçсем илнĕ организацисемпе учрежденисене пичке-каткасене Торг склачĕсене таварса паман организацисемпе учрежденисене кăçалхи пахча-çимĕçсене пама май пулмасть, тесе пĕлтерет.

Торг дирекцийĕ.

Шупашкарти кинотеатртра

августăн 14-мĕшĕнчен пуçласа кашни ытларикун, кĕçнерникун, шăматкун тата вырсарникун сеанссем пуçланас умĕн фойере çар чаçĕн духовой оркестрĕ калать.

Пуçламăшĕ 19 сехет те 15 минутăра тата 21 сехет те 15 минутăра.

СССР НАРКОМЛЕСĔН УЛАТĂРТИ ЛЕСОТЕХНИКА ТЕХНИКУМĔ

1943—44-мĕш вĕренÿ çулĕ умĕн студентсем илесси çинчен пĕлтерет.

Техникум çак ĕçсене пĕлекен техниксене хатĕрлет: вăрман турттармалли механизированнăй çулсем тума, юсама тата вăл çулсемпе усă курма пĕлекен техниксене, çавăн пекех тата вăрман хуçалăх техникĕсене хатĕрлет.

Техникумра 3 çул вĕренмелле.

Техникума СССР гражданĕсене—арçынсене тата хĕрарăмсене илеççĕ, 14 çулхи çамрăксенчен пуçласа 30 çула çитнĕ çынсене.

1942, 1943 çулсенче туллимар вăтам шкултан тата вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен „отлично" тата „хорошо" паллăсемпе вĕренсе тухнисене 1-мĕш курса экзаменсăрах илеççĕ.

Вăтам шкулăн 9-мĕш е 10-мĕш класĕнчен „отлично" тата „хорошо" паллăсемпе вĕренсе тухнисене экзаменсăрах 2-мĕш курса илеççĕ. Ыттисене, туллимар вăтам шкултан е вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен урăх паллăсемпе вĕренсе тухнă пулсан, 1-мĕш курса экзаменпа илеççĕ. Экзамен çак предметсемпе тытмалла: СССР Конституцийĕ, вырăс чĕлхи тата математика.

Экзаменра вăтам шкулсен 7-мĕш класĕнчи программа тăрăх ыйтаççĕ.

Техникума вĕренме кĕме паракан заявленире хăш отделение кĕме шутланине кăтартса памалла. Заявленисене август уйăхĕн 20-мĕш числиччен йышăнаççĕ. Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: автобиографи, вĕренни çинчен илнĕ свидетельство (подлинникне ямалла), хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство тата сывлăх çинчен врач панă справка.

Экзаменсем август уйăхĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа 28-мĕшĕччен пыраççĕ. Вĕренме сентябрь уйăхĕн 1-мĕш числинче пуçлаççĕ.

Техникумăн студентсем валли общежити тата столовăй пур. Апат-çимĕç енчен техникум студенчĕсене продуктсем вăрман промышленноçĕнчи 1-мĕш категорири рабочисемпе пĕр тан параççĕ.

Техникума кĕмелли условисем çинчен тĕплĕнрех пĕлес тесен, техникум канцелярийĕнчен почта урлă техникума кĕмелли правилăсене ыйтса илме пулать.

Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Алатырь, Чувашской АССР, ул. Ленина, 20 Лестехникум.

ТЕХНИКУМ ДИРЕКЦИЙĔ.

Чăваш ялхуçалăх институчĕ агрономи тата **зоотехника факультечĕсене** кĕрес текенсенчен заявленисем халĕ те йышăнать.

Заявленисене тата автобиографипе вăтам шкултан вĕренсе тухнă аттестата çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 34, Сельхозинститут.

Шупашкарти добровольнăй пожарнăй обществăн трупасем тасатас тĕлĕшпе ĕçлекен бюровне **трупа тасатакансем** васкавлă кирлĕ. Арçынсене те, хĕрарăмсене те илеççĕ.

Ĕçукçине ĕçленĕ тăрăх тÿлеççĕ. Супăнь параççĕ. Столовăйра апат çитереççĕ. Хваттер параççĕ. Пĕччен пурăнакансем валли общежити пур.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Хĕрлĕ площадь, 33, Шупашкарти добровольнăй пожарнăй общество. 2—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 357. Типография №1 Управления полиграф, промышленности при СНК ЧАССР, Заказ №2 Ф. 6. 53 88 п. л.